К-26

„Канаш“ хаçат сумĕнче тухать.

КАПКАН

8-мĕш № 8

МАЙ 1926 ç. 2-мĕш çул тухать.

ХЫТ УРАПАПА.



Портфĕллĕ çын. Управштени лашине сутмалла пулнĕ. Экономи решимĕ... Хам пĕлĕкрех çĕре пулнă пулин те, комантировка кайнă ĕухне пар лашасемпе çуреттĕмĕ. Халĕ ĕвтĕ апла кирĕшмест пуль тесе, хыт урапапах çуретĕп. Ех, пурăнăç!. Хăçан «решим» пĕтĕ-ши?

Пĕр пус.

Укçа ҫул касаҫ, тет.
(Халăх сăмахĕ).
Пĕр пус укçа пин ҫул айĕнҫе выртаҫ, тет.
(Халăх сăмахĕ).
Çур пустăн кĕрешмелле.
(«Канаш»).

«Укçа ҫул касаҫ, тет» тенĕ ҫăваш халăнĕ укçана тем те тума пултарнине кăтартаҫ. Укçа пулсан, Тĕллит Тĕллит Микулайĕ хыççăн кайсан,—арăм та пулаҫ. Анҫах хальхи етеммĕн пулсан, ҫул касас йăпала кивелнĕ. Хальхи етем укçа пулсан сывлăшра та вĕçет, шывра та ишет, тип çĕр çинҫе те сехетре темиçе çухрăм кайакан пойăссемпе ҫупаҫ.

Анҫах „пурте йухаççĕ, пур те улшăнаççĕ“ тенĕ пек, пурнăç та улшăнаҫ. Çак «укçа ҫул касаҫ» тенĕ халап та кивелсе пыраҫ.

Тçершински йулташăн ҫаплă приккасĕ „тирпейлĕх решимĕ“ тесен, хальхи вăхăтра пĕлмен çын та çук ĕнтĕ. Комсомолĕс те пĕлет, шонерĕ те, пур те. Пуривҫен ытларах ку приккаса ҫăваш ĕçхалăхĕ ытла та лайăх пĕлет. Пĕр пустăн пулсан вăл «тимĕр хапха» витĕр тухма та хатĕр.

Пасар урам хушшипе иртсе пыратăп. (Кунне астумастăп).

— Ывăçи те пĕр пус çеç, ил! тет ҫăваш хĕрĕ.

Ҫăваш хĕрĕ лантăш (ҫеҫек) сутаҫ.

— Ах, шăрши тутлă та, укçи çук, тет усламçă. Усламçă мĕнле сыннине пĕлеттĕр вĕт, кăрăç. (Кăрăç тенĕрен, çирĕм икке çитсе те Шупашкар кăрăçĕсем пек кăрăç курман ĕнтĕ) хăй çаплах ҫеҫеке аллинҫе йăвалаҫ,—ҫеҫек илемне йараҫ. Çав хĕрех тепĕр сыв патне пыраҫ те, ҫеҫек ил, ывăçи те пĕр пус анҫах тет. Илекен çук. Çапла ĕнтĕ хресҫен пĕр пусĕ. Пĕр пус укçа та пин ҫул айĕнҫе выргаҫ. Ҫăваш сынни пĕр пустăн кĕрешет, тирпейлĕхшĕн тапалашаҫ.

Акă сире тепĕр картин. Шупашкартах. Пуҫварта «Канаш» кореспонтенҫĕпе Рупҫов йул. калаçаççĕ. Кҫаçĕв йатла сывна вырăнтан кăларнă пек туйăнаҫ (Кҫаçĕв вăрман ĕçĕнҫе ĕçлет). Рупҫов калана тăрăх, вăл 7000 тенкĕ тăракан вăрмана 2000 тенкĕ сутса йанă.

5000 тенкĕ. Пĕр пус мар, икĕ пус мар, 3 тенкĕ те мар, 40 тенкĕ те мар, 500 тенкĕ те мар—5000 тенкĕлĕх «тирпейлĕх».

Акă сире Тçершински йулташăн тирпейлĕх решимĕ. Ҫăваш ĕççынни пĕр пустăн тусан витĕр ҫеҫек сутса тертленет, çынсем 5000 тенкĕшĕн... тертленеççĕ.

ПИНЕР.

Пĕр пус пĕр тенкĕ укçана сыхлаҫ.



Пĕр пус укçа. Çынсенҫен нумайĕш мана хисеплемеççĕ. Епĕ маттур салтак. Халĕ те, кирек-хăçан та, ĕмĕр-ĕмĕрех епĕ салтакра—пĕр тенкĕ укçана сыхласа тăма хушнă мана. Епĕ ҫаплă укçа.

Кăсйе çаратакан.

Йерххай:—Ес манне кăсйерен ма укçа кăларса илтĕн?

Куркиă:—Çук, çук, илмен!

Йерххай:—22 тенкĕ кăларса илнĕ.

Куркиă:—22 тесе ма суйатăн? 16 çеç кăларса илтĕмçке.

ЙЕРИНКЕ.

ОТҪОТ.

Тирпейлĕх ре имне цурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекенсем ҫас-ҫасах хăйсем ытлашши расхуг калараççĕ. Хаҫатсенҫен.

Çурма çула çитсен Митрофанăв паян кооперативра сопрани пулассине аса илҫĕ. Вăл, апат тунă хыççăн кăшт уçăлса çӳрем-ха тесе, хирелле уçă çĕре кайма тухнăҫҫĕ.

— Мĕн тăвас тен, кайăсах пулаҫ, терĕ вăл хăйне хăй.—Ултăра пуçтарăнма хушрĕç, халĕ 15 минут саккăрăмĕш, çитме вунă минут кирлĕ. Шăп кăна çитетĕп, терĕ те утрĕ сопранине.

Ҫленсем пуçтарăнкалана, пурте мар та (çулахи вăхăтра ăçтан пурне те пухатăн) çурринҫен нумайах кайа мар.

— Ма килтĕм,—шухăшлаҫ вăл ăшĕнҫе—килмелле марҫҫĕ, ыттисем пек.

Пĕр çур сехетрен сопрани тытăнҫĕ. Преçитиум суйларĕç. „Экономи решимĕ“ çинҫен токлат тумалла. Тирпейлĕ пурăнсан мĕнле усă пуласси çинҫен пĕр сехет ытларах калаçсан (Митрофанăв вăл вăхăтра ҫут кăна çывăрса кайман, хăй çапла калаҫ, пĕрмаях пытармасăр). «Тирпейлĕх» комиççин ҫленĕ çавах кооперативпе правленин претçетаттĕлĕ куçлăхне çамки çинҫен сăмси çине антарса лартрĕ те, çапăн пек отҫот вуласа паҫĕ.

Пирĕн Митрофанăв, ытла ăйхă ан антратăр тесе, пĕр курка сивĕ шыв ĕçсе йаҫĕ те, килнĕ килнĕ—авантарах иглем-ха, тесе пĕр сиккеленмесĕр (хыçĕнҫен пăхсан çывăрсах кайнă тийĕн) отҫот тунине итлесе лараҫ.

— Экономи решимне пурнăҫа кӳртес тĕлĕшпе лосункăсем, плакатсем çаннăмăн (18 плакат) 36 тенкĕ—тет тарне йухтарса претçетаттĕл.—Комиççи ҫленĕсене мĕн пурĕ 66 тенкĕ шалу паня. Таварсем пит кайманнипе йалсене «акиттироваҫ» тума кайнăмăн пĕр ҫлена 37 тенкĕ тӳленĕ,кооперативăвăҫăн çĕнĕ вывескă илнĕ 5 тенкĕ те 75 пуç тӳленĕ тет вăл хытă сасăпа.—Ҫĕршывскийĕ хисеплесе ун портретне илнĕ—7 тенкĕ тӳленĕ, ун ваҫҫи 2 тенкĕ гарса рамă илнĕ, хамăр комиççи ĕçне ĕçлесе вăхăт çуккипе пушаймасăр тепĕр çынна вăтăтлăха илнĕ, ăна уйăхне 18 тенкĕ тӳленĕ. Унтан вара.. унтан тата мĕнле усă кӳнине Митрофанăн итлесе лараймарĕ, ку «палта» темĕн те калĕ, пустуйа вăхăт иртерсе ларас мар, тесе алăк патнерех утрĕ. Ун хыççăн вара пурте хускалаҫҫĕç. Тутлă йăкăпа çывăрса кайнисем анҫах ăйхине çавăраймасăр тайанса ларса йулҫĕç. Мĕн курнине, мĕн илтнине Минтрофанăв тепĕр кунне «Капкăна» çырса йаҫĕ. Епир вара вулакансене калаçа кăтартас терĕмĕр.

СĔЛТĔРМЕН.

Капкăн хуçи.

— Ку номĕра вăхăтра кăлараймăн-шăн еп айăплă ĕнтĕ. Ан йатлăр. Май уйăхĕнҫе шыв айне пултăм. Шывран тухаймасăр нийепле те кăларма май килмерĕ.

Тавăру.

Шăшисем, темме, хуçине çиленнĕ.
Çилĕпе вĕсем ăна тавăрма тăнă;
Çак пысăк ĕç пирки сăмах татма
Шăшисем пуху тунă.
Пелтерӳне вăхăтĕнчех йанăран-и,
Ик кун йĕркинчех пысăк ыйту тăнăран-и,
Пухăва харăсах пухăнчĕç.
Пӳлме айĕнчен, лаçран, ампартан,
Нӳхрепрен те пыраçĕç.
Анкартинçисенчен анчах йару çук:
Хыпар çитеймен пулмалла (пĕлмĕ çук)
Уçрĕç пухуне,
Сăмах паяçĕç пуçлăхне.
Ку сăмахçă нумайăшĕн каларĕ,
Унтан тавлашу карĕ.
—Тавăрмалла! Тавăрмалла! теççĕ
Анчах мĕнпе тавăрмаллине пĕлмеççĕ;
Пĕри—пӳлме шăтармалла, тет,
Тепри—михĕ кăшламалла, тет.
Тата хăшĕ пӳрте кĕрсе сăтăр тумалла теççĕ.
Тем те, тем те калаççĕ!
Çав хушăрах хăла шăши тăрă те
(Паттăртарахăи пулас)
Уçă сассипе пухăва лапах ҫаръă.
—Ыйтатăсем! тет. (Итлеççĕ).
—Епир капла кунĕпе шавласан та йĕркене кĕрес çук,
Хуçана тавăрма та пултарайас çук;
Ман шухăпа ку ĕçе пирĕн çапла тумалла:
Хуçана тавăрма пĕрне анчах хушмалла!
Есир мана шансассăн
Еп ку ĕçе тăвăттăм.
—Шанатпăр! Шанатпăр! тесе
Кăшкăраççĕ ытăсем.
Ку паттăра ҫăнаках та шанчĕç,
Ĕçне тума срук вунă кун паяçĕç,
Вунă кун иртейри, иртеймери—
Шăшисем каллах пухăнчĕç,
Хăла шăши шутланине
Итлеме тытăнчĕç.
—Епĕ, йултăсем, хамăр хуçан
Тĕпсакайĕнчи тĕп мулне тупрăм,
Вара пуйанăн кив укçисене
Веçех вакласа çăнăх турăм, тет хăла шăши.
—Ей! терĕ пĕри пухуран
—Патша укçисем халь çуремеççĕ, вĕт!
—Çуреймĕçин,
Пурĕпĕрех уласа макăрăç!
Терĕ ăна хирĕç хăла шăши.

Н. ЕВТОККИМĂВ.

Çакăнпăнах айăпласпăн.

(Васли Кортейĕ каланинчен)

—Епĕ, Турайри кивçенлĕх кооперативри претçедательтĕп, укçа панкăран параҫҫĕн кăшт анчах сăмах уннăн ĕçеттĕмҫĕ. „Канаш" çине пĕркун ĕçет тесе çырса хуни —суйа, ĕçместĕп, ĕçтерсен анчах кăшт ĕçеп.

Вулăсри пуйансем, арман хуçисем, усламçăсем, мана ĕнсерен тытсах ĕçтерегҫĕç.

— Епĕ стаканне тытмасăрах кăшт анчах сăмакон пырша ан шăтарăр тесе, ĕçтернĕ ҫух икĕ алăмпах хырăма шăлса анчах ĕçеттĕмҫĕ. Кайран кивçенлĕх кооперативри пур пек. çук пек укçине пĕтĕмпех ĕçтерекенсене, тата пуйăр, хама ӳлĕмрен лайăкрах асăнăр, ĕçтерĕр тесе, параттăмҫĕ.

Ревиçи тусан кассăра 475 тенкĕ 50 пус анчах тухмарĕ.

— Хама ваҫҫи йӳнерех хакпа пĕр лаша çеç илсе йултăм. Улма суткланă ҫух, 3 йешĕк те 5 майăх анчах хам çирĕм, тата 10 йешĕк улма Идăйинкăри приспăне тытса тăракана сутса укçине хама илтĕм, пуйантарах çынсенчен вкладсем пуçтартăм, ак Çтепан Николайĕвран 250 тенкĕ илтĕм, 58 кун опорог туса ироҫăн 35 тенкĕ тӳлерĕм. Нумай проҫăн тӳлен теççĕ.—Вăл нумай-и?

— Йаг тухтăр тесех ĕçлерĕм, упыткă 1020 тенкĕ те 78 пуслăх анчах турăм

— Хаҫ çавах: сан хĕвел анса ларҫĕ. Шупашкарти шурă çуртра аван номĕрсем пур, çавăнта пурăнма кай, тесе кооперативран çавăтсах кăларса йаҫĕç.—

— «Капкăн»!—есĕ те пулин ман хута кĕр!

Сасăсăр йулнă çын.

— Ех, сасăсăр йултăм.
— Простутă хыççăни мĕн?
— Çук. Сут хыççăн. Пухусенчен 3 çул хушши сасă памалла мар туса хуҫĕç.

Ҫаплă ревиҫи.

Хăш ҫухне кооператривра растраттăсем пулнăшăн ревисорсем те айăплă.

(Хаçатсенҫен).

Ҫиҫĕ кун та, ҫиҫĕ çĕр ревиҫи пыраҫ. Каснаҫейĕ ним тума пĕлмесĕр каҫҫă-маҫҫă уткаласа ывăннă, ҫĕри калама çук хыгă сикнипе вĕçерĕнсе кайас пекех тăнă.

Пухăттĕр пĕр-пĕр ҫыхвăра тĕп кĕнеке çине çырса хунă хыççăн ҫернилĕ типсе çитиҫенех ревисорĕ çав йĕпе ҫыхвăра шута илсе пыраҫ.

Уйăса арҫи çаплах уçăлса хупăнаҫ: каснаҫей хăй аллипе арҫана ҫикнĕ пиленех, малтан ревисор куçĕ, унтан ревисор аллн арҫа ăшне кĕрсе кайаççĕ.

Хут укçисем, кĕмĕл укçисем, пăхăрсем тарласа кайнă: арҫара выртас вырăнне алла-аллăн çуреççĕ.

Претçетаттĕлпе правлени ҫленĕсем ревиҫи пĕтессе кĕтсе ывăннă: те хĕпĕртенипе ĕçсе ӳсĕрлесшĕн, те тата тĕрмене кайасшăн.

Ревисорĕ пĕр май ревиҫи тăваҫ, канма та пĕлмест. Пĕр хут ревиҫи тунă хыççăн, тарланă çамкине шăлса илсе сăмсине шăнкартаҫ те, каллех ревиҫи тума тапратаҫ. Пĕр аллипе ревиҫи проттоколĕ çине ал пусаҫ, тепринпе çĕнĕрен ревиҫи тума тапратаҫ.

Ревиҫи тунă ҫухне çырса пынă ҫыхвăрсем çырнă хыççăнах типсе пыҫҫăр тесе, пухăттĕр хăй кĕнени çине çырмалли ҫыхвăрсене химиҫĕски кăрăнташпа çырма пуçланă.

Правлени ҫленĕсем икĕ пайа уйăрăлнă: пĕри, ревиҫи лайăх пĕтнĕ хыççăн ĕçмелли пулăр тесе, хĕрĕх кратуслипе сутнă çĕре ҫерет кĕтме кайнă, тепри тата, ревиҫи хыççăн сута ленкмелле пулĕ тесе, халăх суҫĕн алăкĕ умне ҫерет йышăнса тăнă.

Претçетаттĕл, ҫи малти ҫеретре тăракансĕр, сасартăк хăй кооператривĕ патне ҫупса пырса ревисора калаҫă:

— Ей, йулташ, пивнойа ревиҫи туса пăхрăни?

— Пухăттĕр отҫотне, кассăра, лавккăра мĕн-мĕн пурине тĕрĕслесе тухрăм, пивнойа...

— Пивнойри сăра хăватне ревиҫи туса пăхмалаҫҫĕ. Саккун хушнинҫен хăватлăрах пулнă сăрасене сутмаççи унта?

Хура сысна.

Вăхăҫĕпе хĕвел те
Никама та кирлĕ мар,
Çулла шăрăх кунсенҫе
Сыснана пит аван мар.
Пĕр лупашка хĕррипе
Пыраҫ сысна ахлатса,
Хĕвел хыгă хĕртнипе
Вăл шăрăхпа пăҫăхнă,
Лупашканăн варринҫе
Пылҫăк çинҫе вăл выртнă.
Анҫах хĕвел унтан та
Хăйĕн вĕри çуттипе
Пирĕн хура сыснана
Хăваласа кăларнă;
Ниçта кайа пĕлмесĕр,
Сысна утаҫ хуйхăрса,
Ним калама пĕлмесĕр,
Пĕҫҫен пыраҫ калаçса:
— Ах! Ах! Шăрăх...
Тупайăпшн вырăн урăх
Кăшт çех выртса канмалăх.
Ах! Шăрăх!
Çахă йăвăр вăхăтра
Выртăттăм-ҫĕ картара.
Шăрăх, шăрăх!
Ах, хăйамат хĕвелĕ...
Хуçан аслă ывăлĕ
Паçăр кăна картаран
Патакпала хваларĕ..
Ах, шăрăх!
Кĕтеп вĕри вилĕме.
Кăна йăтă илтрĕ те,
Сысна патне çитрĕ те:
— Тата мĕн-ха, Матĕрне?
Ан вăрç халĕ хĕвелне!
Питне куçна тасатсан,
Кăшт тасарах пурăнсан
Сана хĕвел пĕçермĕ,
Капла питех аптартмĕ, терĕ.

Н. ЕВТОККИМĂВ.

— Çук, тет сăнран ӳксе ревисор.

— Васкатăна, терĕ претçетаттĕл.

Ревисор пивнойа васкана. Вĕçĕмсĕр ревиҫи вара ҫурăнса та ларнă.

Путыпкасем пушаннă, çӳлĕксем пушаннă.

Каснаҫейĕн ҫĕри те хăй вырăнне пырса ларнă.

Икĕмĕш ҫеретре тăракан правлени ҫленĕсем пĕремĕш ҫерете куçнă.

ТĂРНА.

Тирпейлĕх решимĕ йалта.

Йал тени вăл Шупашкартан инçетре лараҫ: хăшĕ 7—8 çухрăмра, хăшĕ 134 çухрăмран та инçетререх. Çавăнпа та пирĕн хурçă пек çиҫĕҫ лосунксем, унта ир çинҫе 5—6 сехетре çитмеллисем, хăш ҫухне каçхи апат çинĕ хыççăн хыçкаланса тăнă ҫухне тин пырса кĕрекенҫĕ, мĕншĕн тесен йалта хаçат илекенсене хăрах алăри пурнесемпех шутласа кăларма пулаҫ. Анҫах пурлăха тирпейлĕ тытасси çинҫен кăларнă лосунк, тем майпа тата, йала пит хăвăрт çаврăнса çитрĕ.

Майăн 1-мĕш кунĕнҫе «ҫăваш йӳççине» шухăшласа кăларнипе ҫапа тухнă Шеммем йалне (Шăмат вул.) сĕтĕрĕнсе çитмелле пулҫĕ. Халăх пухса çу праçникĕ çинҫен çуллă токлат туса парастăнҫĕ те, уҫитлине ҫĕнсе шкул çуртне уçса пама ыйтрăмăр. Уҫитлĕ пире çапла çатлаттарса хуҫĕ:

— Шкула кĕртместĕп. Урай вараллаттăр. Халĕ решим экономи. Урайсем çуса укçа-тенкĕ пĕтерме пулмĕ. Лаша илнĕ ҫух тавлашса тăнă пек, ҫылайҫен тавлашса тăрсан, аран-аран шкула кĕрсе карăмăр.

Шкул урайĕнҫе икĕ пӳрне ху анĕш ыҫҫăк.

— Ку урайа ма çуман, тесе ыйтсан:

— Перекат решимĕ, терĕç.

Вĕсем, кăтă Хветĕр пек, урай çусан урай хăмисем çӳхеленсе йулаççĕ тесе, хĕл каçиҫҫенех шкул урайĕсене çуман. Ухмаха турра пуççăнма хушсан, вăл хăйĕн çамкисене те çалса çурĕ, тени çак пулҫĕ ĕнтĕ вăл.

Йăлăмкас вулăсĕнҫи çынсем тата, хăйсен ытлашши укçисене перекет кассине леççе парас вырăнне, Хурăнлă Ҫăкăрти Микук йумăç патне леçме вĕреннĕ.

— Укçасене пĕр çĕре пухатпăр. Елĕк, сгорай решим ҫухне тума вĕреннине экономи решимĕ вăхăтĕнҫе те пăрахăнмастпăр. Мĕн айăп пур унта?—решима хирĕç пымастпăрске елĕр теççĕ.

Кĕҫкей йалĕнҫе тата тепĕр йышши тирпейлĕх шухăшласа кăларнă. Кушак сурăх, сысна, шăши виллисене, çăва çине илсе кайса пытарас вырăнне, урамри çĕр çемçелсе выртăр тесе, урамрах выртгарса çӳретеççĕ. Анҫах вĕсен тирпейлĕхĕ перекетлех пулман, тет: выртса çӳрекен вилĕсене хăш ҫухне йăтăсемпе сыснасем тирпейлесе хураççĕ, тет те, кайран сыннисем те, тирпейлĕх решимĕ саккунĕ тăрăх, тирпейленсе выртаççĕ, тет.

Нурăс вулăсĕнҫи Алкоçинри погрепиттĕл кооператтивĕ халăх укçине тирпейлĕ тытмалла тенине урăхларах ăнланнă. Кооператтив ваҫҫи çĕрĕк, йӳвĕ пулă туйаннă. Хурҫĕсем куçа та курăнаççĕ.

— Ма сутаттăр ку пулла, тесен:

— Решим экономи!.. Иӳнĕ. Ҫленсем тирпейлĕ пулҫҫăр. Хаклă товар илсе укçа сайа ăн йаҫҫăр, теççĕ.

Ун пек тирпейлĕхсем пирĕн хушăра пиҫ нумай. Хăшĕ вырăс йӳççи хакла ӳкет тесе, сăмакуннăй йухтарса лараççĕ, хăшĕ... Анҫах вĕсем çинҫен çырса ытлашши хуҫ пĕтерес марха. Хуҫ тĕлĕшĕнҫен те тирпейлĕх пултăр.

МАМИ.

Шăнапала пыл хурҫĕ.

Пыл хурҫĕ пĕрре пӳртĕ кĕнĕ.

— Ха! тет шăна ун çине пăхса,
Йăлтах пирĕнни пек сăнĕ,
Шăнан пекех куçĕсем,
Авă, тата еппин, урисем...
Пирĕнни пекех сăнни пур,
Мĕншĕн ҫапа тухнăва вăл мур!
«Пыл хурҫĕ те пыл хурҫĕ» теççĕ,
Вĕсен усăллă ĕçĕвҫен тĕлĕнеççĕ,
Мухтамаллăх хапи çук,
Еп те, тытăнсан, ĕçре унтан йулаҫ ук!

— Тĕрĕс! тет ăна хирĕç пыл урҫĕ,
Есĕ, тытăнсан, ĕçре манран йулас çук,
Анҫах санран тытăнасси пулас çук:
Шăна тени йанттине йуратаҫ;
Тата çакна калас пулаҫ:
Ĕç тенине пурте ĕçлеççĕ,
Пĕрлешсе ĕçлеме нумайĕшĕ пĕлмеççĕ,
Пĕрлешӳллĕ ĕçпе
Епĕр тĕнҫене тĕлĕнтеретпĕр,
Пирĕн пек пĕрлешсе ĕçлеме
Сире те ҫĕнетпĕр.

Ку сăмахсем такамшăн та усăллă пулмалла:
Етем те, пĕрлешсен, ĕçне ăраснах кал-кал тумалла.

Н. ИЕВТОККИМĂВ.

ПАЛЛĂ ТНЕВНИК. [1]

(Пулма пултаракан йапала.)

Апрелĕн 25-мĕш кунĕ. Пайан «Правтă» хаçатра экономи решимĕ çинĕçен лĕпĕртетнине вуларăм. Темĕнле решим пулсан та, мана пришим тăвас çук. Ак, вăт, 10 пăт товар илме Аçтăрхана кайса килĕп, унта... Местком сторошихăна шалу ӳстерсе парастăн, епĕ: «экономи решимĕ» тесе шалу ӳстерсе памарăм. Арăм тени çилленнĕ ҫĕ. Киле пырсан ҫӳп туса илтĕм. Пĕҫĕкçĕ ҫухне ҫи тутлă апат шушкă пуҫ, тенĕ-ҫĕ. Халĕ шушкă тенине çийес те килмест. Котлетсем, нешăнккăсем, коҫҫаксем... Революци майлă кайни йурăрĕ.. Тĕлĕкре упăте куртăм,—ман сăнă.

Майăн 8-мĕшĕ. Çĕнĕ машинистка туйăнтăм. Мăнтăр, ҫиперскер. Куçĕсем хăй патне ҫĕннĕ пекех йалкăшаççĕ. Тирпейлĕх çинĕçен лĕпĕртетрĕмĕр. Арăм хырăмĕнҫе аҫа тытăнма пуçланă.

Майăн 16 мĕшĕнҫе. Аçтăрханта. Пĕр каçра 200 тенкĕ ĕçсе пĕтертĕм. Майрасем йуратаççĕ. Мĕншĕн йуратаççĕши? Те сăмса лапҫăк пулнăшăн, те урăххишĕн?

Майăн 31-мĕш кунĕнҫе. Пухалтĕрпа съотсем çыртăмăр. Хула тулашĕнҫе кулет туса çӳрерĕмĕр, машинистăпа. Парăнҫĕ. В ç расрет шалу ӳстерсе пама пултăм. Майрапа çӳренине арăм курнă. Турҫăкапа çапрĕ. Тĕлĕкре Микулай патша хĕрĕпе йавăçнă. Ҫитер, мур! Каҫҫа илсен...

Ийунĕн 2 мĕшĕ. Мухмăрла. Местком ҫленĕсемпе ĕсрĕмĕр. Тирпейлĕх çинĕçен калаçрăмăр. 3 уйăх ĕлĕкрех 400 тенкĕ парса илнĕ лашана 260 тенке сутса йатăм. Арăма вăйпах виçĕ хут ҫӳптуса илтĕм. Усăк тути йăл кулҫĕ.

Ийунĕн 4-мĕшĕ. Аçтăрханран илсе килнĕ товар веçех çĕрĕк пулнă. Акт çыртăмăр. Ĕçĕ пĕтрĕ. Килтен атте килнĕ. Выçă пурнатпăр тет. Паранка çиме хушрăм, çийĕнҫен и павăй усăлли çинĕçен лекси вулаçа патăм. Камантировкка кайма хатĕрленетĕп. Экономи решимĕ çинĕçен манма пуçларăм. Хаçатра курсан та вуламастăп. Картла çатлаттартăмăр.

Ийунĕн 12-мĕшĕ. Хурах! Распой!.. Тытма килҫĕç. Виçĕмкун ман çинĕçен статйа тухнă. Пулăшăр! Пулăшмасан кăларса йарăп. Хурах! Контревольутси! Старый решим!..

Ийулĕн 1 мĕшĕ. Тĕрмере. Арăм шушкă илсе килсе çатерҫĕ. Пит тутлă. Арăм тути те пит тутлă. Йĕке хӳресем аптраççĕ. Тĕрмерен тухсан хамăр аптекăри йĕке-хӳре вĕлермелли емелсене пĕтĕмпех уҫрештени уҫипе илсе йарса пур йĕке-хӳресене те вĕлерсе пĕтерме сăмах патăм. Амнисти пулассине кĕтетĕп. Хамăран сторăш папекех ыранланса карăм. Майрасем паллас та çук. Ҫернил пĕтрĕ.

ИĂВАН МУҬИ.

---

[1]) «Тневник» тесе—пĕрпĕр çын кашни кун мĕн-мĕн курни илтни çинĕçен пал туса пымалли кĕнекене калаççĕ.

„Йакку сыснами“.

Йакку арĕм тумланса,
Турра хытă ĕненсе,
Кайаҫ ҫӳрке кĕлтума
Христус турра пуççапма
Тăвайкирен хăпарăн
Кĕрет арăм ҫиркĕвĕ
Пупсем йурлаç л-тăваç
«Иако с «нз пох» тесе.
Хайхи Йакку арăмĕ
Кăштах турра пуççапсан
Хĕпĕртесе савăнса
Хăйĕн килне вĕçтерет.
Пӳрте кĕнĕ кĕменех
Ара... Йакку, итле ха!
Пирн сыснами пурринe
Ҫиркӳре те пĕлнĕ, вĕт.
Тур умĕнҫи пупĕсем,
Пирн сыснана асăнса:
„Йаккун сыснами пур“ тесе
Йурлаç ҫинкĕ ет Йаккуне.

КĔРКУЛЕС.

...ак сăвви.

Пирĕн çыхăн çирĕп. Ҫухăнсен анҫах мар, кулаксем те пирĕн пата çыпусем çыраççĕ. Çтихпа çыракансем те пур. Акă, пĕри çыраҫ:

„Капкăн“, мана çаклатрăн,
Иама хăçан шухăш пур?
Çынсене те кăтартрăн.
Йар тархастăн, турă пул.

Çук, турă пулас килмест. Йамастăп.

Çутта кăларакан пулăҫнăй.

Пирĕн пата пĕри хутпа ҫĕркесе пĕр татăк кулаҫă йăнă. Хуҫĕ çине çапла çырнă:

«Çак кулаҫа ĕпĕ Капранăв пулăҫнăйĕнҫеэ илтĕм. Кураттăри ун варринҫе хаçат пур. Кулаҫă ăшне хаçат ҫиксе пĕçернĕ. «Капкăн» тус, вĕрентха Капранăва хăй ĕçне ĕçлеме.»

Халĕ тирпейлĕх решимĕ çинҫен калаçнă ҫухне, кулаҫă тухăçлă пултăр тет пуҫ. Ираҫ. Тирпейлĕхшĕн тăрăшаҫ. Куншăн ăна Сывлăх Комиссариаҫĕн метаҫ памалла. Ылтăнран туни çук пулсан, хутран туса „штраф" тесе çырнине парсан та йурамалла.

Кооператси вăйланни.

Вăйлă суттăваççĕ кооператтивсем. Тăвар çитеймест!

Сĕнтĕр вулăсĕнҫи «Сӳре» йăтлă кооператтив прикащҫăкĕн ревиçи тунă ҫух, 70 тенкĕлĕх тавар çитеймен.

Анҫах таварне хресҫенсем мар, прикащҫăкĕ хăйех илсе пĕтернĕ, мур!

Çил те вăрлама пĕлет.

Ҫупай вулăсĕнҫен Çулпуç кореспотент çыраҫ:

Кив-Çурт Маркари арман тытакан ерттелĕн ĕçĕсем пит йăпăхса кайнă: ампар çийĕнҫи улăмĕ вĕçсе кайса пĕтнĕ—çапçарах лараҫ; арман çĕрĕ 5 теçеттин. Унпа та усă курма пĕлмеççĕ. Арман пӳрт урайне нихçан та çуман, тет.

Мĕн тума çăвас? Арман пӳртне те çилпе вĕçтерсе кайсан урай çуни ха рама куйаҫ теççĕ пуҫ.

Шыв шеллеççĕ.

Халĕ пире тирпейлĕ пурăнма вĕрентеççĕ. Тирпейлĕ пурăнма кирлех. Анҫах...

«Епĕ пĕрре Çĕрпӳ пуҫнитсине аҫана илсе кайрăм,» тесе çыраҫ пĕр хресҫен. „Ларсан, ларсан ман аҫа шыв аптăрата пуçларĕ. Пакша шыв лараҫ, анҫах курки çук. Стурăшран курка ыйтрăмăр та, курка çук, киле кайсан ĕçĕр, терĕ те таçта кĕрсе кайрĕ. Унта 20—25 çухрăмран килнисем те пур. Никамăн та çумĕнҫе крушкă çук. Аҫа пит аптăратнăран епĕ пĕр çывăхрах лавккана кайса 20 пуса стаккан шыв илсе килтĕм. Пак патне пытăм та кăранне çтена йенне çавăрса хунă. Стурăша çавăрма хушрăм та, есир кăрантран йухтарса урайне йĕпететĕр, çӳлтен ăсса ил, терĕ. Çакна тата хвершăл курҫĕ те пире «ухмахсем» тесе вăрçа пуçларĕ. Нумайĕшĕ вăрçасран хăраса ĕçеççисем килсен те ĕçме хăраса ларҫĕç», тет.

Тепле çын çинҫен калаççĕ ха „кĕл тума хушсан çамкине çĕмĕрет" тесе. Çĕрпӳ пуҫнитсин стурăшĕпе хвершăлĕ те çавах. «Тирпейлĕх» тесе вĕсем çынсене шывсăр типĕтсе вĕлерĕç.

Ултавçă.

Тăрапайра (Хĕрлĕ-Ҫутай вул. Иетĕрне уйесĕ) пĕр Шулайĕв йатлăскер лавка уçрĕ те, тĕрлĕ кирлĕ-кирлĕ мар йапаласемпе патгентсăр-мĕнсĕр сутă тума тытăнҫĕ. «Ку аҫа пăрахмалли емел, ку пуç ыратнине ҫаракан емел» тесе ҫăвăш хĕр-арăмĕсене улталаса пурăнаҫ. Иепле ҫарас ăна, тесе ыйтаҫ йулашкинҫен çыртакан.

Ăна ҫарма темех кирлĕ мар. Ăса кĕртекен „емел" туписа парас пулаҫ.

Сывăрсах кайнă.

Ӳлтӳрт-Туçа (Шĕнерпуç в. Шуп. у.) йалĕнҫе пĕр орканисатси те çук. Иал сыннисем ĕлĕкхи йăласенҫен пĕрте уйăрăлман, ҫиркӳ праçникĕсенҫе ĕçсе ӳсĕрĕлсе вăрçса пĕтеççĕ, çапăçаççĕ. Çур йал сăмакун вĕретет. Ҫырлесен тухтăр патне каймаççĕ, тĕрлĕ ват карҫăксем патне кайса вĕртереççĕ, тет йалкор.

Тутлă ăйхăпах сывăраҫ иккен йалĕ. «Капкăна» тĕлĕкĕнҫе те курман пулас, курнă пулсан хăраса вăраннах пулĕҫҫĕ.

Сăхă.

Пырса кĕтĕм пĕр йулташ патне. Патмар çирĕп çын, темскер, пуçне аллипе тĕкеленĕ те сĕтел хушшинҫе лараҫ.

— Мĕнле пурнан, пурçăн тус? тетĕп.

— Е, тăм писмен, мĕн мĕнле— Пĕлетĕн, пурнăç мĕнле—сăхă, тет.

— Мĕнле апла çулла «сăхă» каламалли пур? «Сăхă» тесе хĕлле сивĕре çул йăвăрпа çуна наҫар шунине каламаççĕ-и?

— Ай, çулла наҫар шума пултарайманнăç тетĕн-и мĕн, пирĕн хуçайствĕнниксен пурнăçĕ—терĕ те, куçне ҫарса ман çине тĕллерĕ ман сулхăнлă йулташ.

— Ну, йурĕ, килĕшĕп, анҫах калаçа кăтарт—мĕнтен сăхă санăн пурăнăç?

— Мĕнте, мĕнте?!.. Тĕмрен те! Укçа çук кассăра, памаççĕ панкăра—сăхă... Тавар тупмалла мар, халăх та тăваймасăр—сăхă... Тырă наҫар пуласси курăнса тăраҫ: халăх парăм тӳлеймест—сăхă...

Тата сăхă—расхутсене, шкатсене ҫакарнă ҫӳх: «решим экономи» тума тытăнсан.

— Унта тата мĕнле сăхă? тĕлĕнетĕп епĕ.

— Кунта.., кунта,.. кунта пуринҫен те сăхă... Калама çăмăл: ҫакарап, перекетлеп... кĕскетеп... теме.

Пырса пăх-ха ман «ĕçлĕ çынсем» патне. Ҫакаратăн шалти—ĕçе сăхă шутараççĕ, сахалтан слушăшҫи—сверхуроҫнăй ĕçлесе тимретеççĕ, вакçĕлсене сыхласа пыми пулаççĕ, пĕр сăмахпа каласан: сăхă, тăк сăхă, ĕнтĕ.

Çапла каласса ларнă вăхăтрах телефон шанкăртатрĕ. Пурçăн йулташ пĕр тухăмĕнҫе телефон шăхлиҫине йарса илҫĕ те итлеме тытăнҫĕ. Хăйĕн итленĕ çемĕн тути йелпĕрет:

— Ехе...ийе,.. йурĕ, тесе анҫах пуçне силлесе калаçаҫ.

— Мĕнле хĕвел куртăн-ара? тетĕп те хамăн та ҫун çĕкленнĕ пек туйăнаҫ.

— Ара, шыв Атăл таврашне пусмăрлана пирки укçа ыйтма май пур пит, тесе сиксе тăраҫ те пухалтĕрне ҫĕнсе илет.

Лешĕ сăмса тăрăх куçлăх виттĕр пăхса кĕрет те, пуçлăхĕ умне пырса урисемпе кукалесе тăраҫ.

Хытă çын.

Лаша. Ытла сахал апат паратăн. Сан çийеси, ман çийеси кăна. Мĕншĕн хытса кайрăн!

Хуçи. Ку утă халăх çаранĕ çинҫен тăрланăскер, çавăнпа ăна тирпейлĕ тытмалла. Халăх пурлăхне тирпейлĕ тыг, теççĕ.

— Халех, М. М., ҫыхвăрсам хатĕрле: Шупашкарта скват шыва кайнипе 10000 т., Улатăрти макаçин умне шыв пынипе икĕ кун сут туман пирки 2000 тенкĕ сийен. Çĕрӳре 5000. Вăрнарта потвалсене шыв тулнипе тавар пăсăлса хакĕ ӳкнипе 1000 тенкĕлĕх.... Тата та... тата та...Мĕн пурĕ 35000 сийен куртăмăр шывран, тесе пĕтерҫĕç пухалтĕрпе иккĕшĕ.

— Тин сăхă пĕтĕ, тесе хĕпĕртесе пăхрĕ ман çинелле пурçăн йулташ: тӳлеççĕ вĕт мĕн пур Атăл сийенне.

— Сăхă пĕтĕ, йĕпе ҫăхă пулĕ, терĕм те йулташа ал парса тухрăм.

Н. ШУПУÇÇЫННИ.

Аслă çынпа ăслă çын.

Мăн çул çийĕ майĕпе пирĕн Кашмапа (Шурҫа в.) тем тĕрлĕ çын та кĕрсе кайаҫ. Мăнкун виҫĕ кун тенĕ ҫух пĕр палла, аслă çын килни илтĕнҫĕ. Иулташ çав тĕрлĕ илĕртсе ҫĕннĕрен епĕ те ĕçе пăрахсах ҫаплă çынна курма утрăм. Епĕр çак аслă çынпа Шыçмак Иармула халапланса ларнă тĕле пултăмăр (иккĕшĕ те ăш кĕленĕ таран сыпнăскерсем).

— Йа сотсиалтемократ - анархист Алекçей Самарин, тесе кастараҫ лешĕ вырăсла,—епĕ таçта та çитсе курнă, тем те пĕлетĕп, анҫах çак çуттине сыпасса, çын хĕр-арăмĕпе пурăнасса хам вилиҫҫен пăрахас çук. Мĕншĕн Самаринăн пуçĕ кукша? Ех, ҫунăм!..

Ку та кайа йулса намăс курастăнах мар:

— Хĕрпе арăма çавăрасси мĕн вăл? Хамăн шухăшăм пулсан, епĕ ҫупой хĕре, арăма çавăратăп, майне пĕлес пулаҫ. Епĕ тĕрлĕ йапаласем çинҫен тĕрлĕ майсем пĕлетĕп, сăмахран, вырмай хĕр-арăма „вĕри çĕленсенҫен“ хăтарса, ывăл аҫа йе хĕр аҫа çурралассине пĕлетĕп... Ҫукун çул ĕçне, çĕр виҫес тĕлĕшрен... суг ĕçĕпе мана нихăçан та айала тăваймăн: пĕлтĕрхи мăнкунта пĕр комсомола сыснана вĕтнĕ пекех ăшаларăм. кĕркуннепе атте (вăл туркă вăрçи ҫухнехи салтак) наступлени тунă революцера илсе карĕç, хĕлле пĕр йалсовет ҫленне хурах туса пăркăҫăласа пăрахсах хĕртрĕмĕр, шелкĕшĕ анҫах йулҫĕ... çапах сутра çийеле тухрăм, епĕ...

— Хе...хе...хе .. мноко-ли есĕ курнă? Епĕ Иетĕрнере, Шупашкарта, Сĕнтĕр-Вăрринҫе... Иулашкинҫен Çĕрпӳре пурăннă ҫух мана, кашкăра йытăсем тапăннă пек, тапăнаҫҫĕç, но не натово налетели, йа старый морйак—электротехник—тет вырăсла.

Ларма вăхăт çуккипе епĕ тухса карăм. Тепĕр кунне: „Лешшыçмакăн арăмне тапăннă, арăмĕ вĕçерĕвсе тарнă та—60 çулхи амăшне çулса илнĕ, карҫăк кĕç-вĕç анҫах ҫунне турă аллине паман“, тенĕ сасă сарăлҫĕ йал хушшинҫе.

Виҫĕ кун çапла аташса çӳресен Самар кайăкĕ Хуҫашалла вĕçтерҫĕ, хăйне савакансене, курас текенсене Иетĕрнери çу савăтне ҫĕнсе хăварҫĕ, унта электритсă çутти те, тепĕр йышши çутти те пулас пек каларĕ.

Хăйамат.

„Тирпейлет“.

Тирпейлĕх решимне пурнăçа кĕртнĕ ҫухне пит пĕлсе ĕçлемелле.
(«Канашран»).

— Çырха малалла, тет Павăл Павăлҫăн секреттарĕ патнерех пырса.— Сар. Халăх Хуçайствин Тĕп Советĕ Сроҫнă. Пирĕн уҫрештенире «е[illegible]ми решимĕ» текен лозунка пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çаксене тунă... „Çыртăн-и?“—Сиртен «тиректив» илсенех 11 пайлă комиççи суйларăмăр. Çав комиççисем... „Çыртăн-и?“—Çав комиççисем тăрăшса ĕçленипе... Пĕр минут шутласа илĕпĕр. Кăранташ тыт-ха!»...

Секреттарĕ çыракан хутне пĕр йеннелле пăрса хуҫĕ те плок-нот илсе шутлама тытăнҫĕ.

— Çапла вара. Тĕрлĕрен шурвалсем çине опйавлени паман—пĕр çул хушшинҫе—204 тенкĕ тупăш йулнă. Сотрутниксене „сократтит“ тусан вĕсене компенсатси паман—155 тенкĕ 3 куйĕра, тата 1 упоршҫитса каларнă—75 тенкĕ, кĕçĕнрех сотрутниксене хĕрлĕ ҫернил вырăнне сенкер ҫернил панă, усси... хм, ахе... Ҫимха... Ну ларт—120 тенкĕ. Тата мĕскер? Реклама—пур, штат—пур, пуштă .. Иурĕ çыр. Çырусем йарас вырăнне телекрамсем çӳретсе 300 тенкĕлĕх таса хут сыхланă. Çыр-и? Шутла ха пĕтĕмпе. Секреттарĕ кăранташпа çыркаларĕ те: „Мĕн пурĕ 854 тенкĕ“ терĕ хут çине пăхса.

— Сахалтарах! Ларт пин те сакăр çĕр аллă тăватă тенкĕ. Лартăн-и? Çыр малалла! Ăçта çитнĕҫĕ-ха епĕр? Мĕн пурĕ 1854 тенкĕлĕх усă кӳнĕ. Çыр малалла. Комиççи пĕр ҫаранмасăр ĕçлет. Малашнехи ĕçĕсем çинҫен хăй вăхăтĕнҫе пĕлтерĕпĕр“. Пĕтрĕ. Ну, кăна нумай пулмасăр илнĕ çĕнĕ планкăсем çине çаптар. Коппине ретаксине йар.

* * *

Ĕçне пĕтерсен Павăл Павăлҫăн аллисене икĕ кăсйине ҫикрĕ те савăнипе шăхăркаласа кĕтесрен кĕтессе уткаласа çӳрет. Ĕçе вăхăтĕнҫе пĕлсе туни йаланах савăнтараҫ вăл.

С—Н.

САРПИКЕ.

— Савни манран сивӗнҫӗ пулас. Парнесем пама пӑрахрӗ. Халӗ, тет, хулара решим: комантировкӑсене сӳресе укҫа тупаймастӑп, тет. Суйаҫ пуҫ. Мӗнле майпа илӗртес-ши?

Фоккус.

Ӗлӗк авал ҫыркӑсенҫӗ фоккўсникӗм стакканӑ ҫыртса илсе, шатӑртаттарса ҫӑмласа йараҫҫӗҫ. Халӗ ӑна Именкассинҫи Халкинҫ туса пӑхнӑ. „Вӑл ӳсӗрпе стаккан вырӑнне кӗрӳшӗн сӑмсине ҫыртса пӑхнӑ. Шӑлӗ, тимӗр пулманран пулмалла, сӑмсине татсах илеймен“.

Епӗр шӑлпа кукӑҫ анҫах ҫийеççӗ тенӗ, етем сӑмси ҫиме те йураҫ иккен. Кун пек ҫаплӑ йапала шухӑшласа кӑларнӑшӑн ӑна накратӑ памалла. Ун пирки халӑх ҫлетӑвӑттӗн мӗн калӗ-ши?.

Йӗке-хӳре.

Ҫураҫӑк вулӑсенҫи (Ҫӗрпӳ ӳнесӗ) Лашман йатлӑ хӗвертӑл-пу . . Ҫакӑн патне тӗрлӗ ҫиртен пулашу ыйтма. пӗр йапаласӑр пырсан пӗртте ӗретлӗ пӑхса кирлӗ пекартсу памасҫ. Пӗр икӗ теҫетке ҫӑмарта илсе пырсан анҫах аван пӑхса йараҫ. Пӗрре ҫапла Вӑрман-кассинҫи Уҫӑп Михали куҫ ҫирӗпе пырсан, ӑна 15 ҫӑмарта панӑ та, ӑна аван пекартсу парса йанӑ, тесе ҫыраҫ Аксӑ.

Ҫак кунсенҫе ҫӑмарта хакӗ ҫавӑнпа иккен ӳссе карӗ пулас.

Тирпейлĕх сăввисем.

Çăка турта хуçăлтăр,
Иуман турта тата пур.
Иапăх пуçлăх тĕп пултăр
Лайăх пуçлăх тата пур.

Тарăн çăлтан шыв ăсма
Çутă витре кирлĕ мар.
Тирпей сукка курмашкăн
Куçлăхсемех кирлĕ мар.

Урам урлă каçнă ӳух
Такăннă пек пултăн и?
Хысна укçи алра ӳух,
Кăлтăк пулӳ тестĕн-и?

Пайан сырнă шур урана
Хуратас мар-ӳĕ пайанах.
Хаӳ суйланă тусăма
Варалас мар-ӳĕ кăçалах.

Çивĕӳ хаӳри пит виӳкĕн
Хура тăла касмашкăн.
Проккурорсем пит ӳейе
Вăрăсене тытмашкăн.

Вуник салма пĕçертĕм
Пĕрне вутта ӳкертĕм.
Вуник çынна суйларăм
Пĕрне сута леçтертĕм.

Вĕт вĕлтрен йашкине
Çийес килми пуçларĕ.
Иапăх ĕçлен çынсене
Курас килми пуçларĕ.

Кĕмĕл çĕрĕ çутă мар
Варне тăхлан хурсассăн.
Кооператтив лайăх мар
Пуçлăх йапăх пулсассăн.

Хура вăрманта тил выртаӳ
Çынна курсан вăранаӳ.
Кооператтив çывăраӳ
„Капкăн" пырсан вăранаӳ.

Кăпинетра ларакан—
Алă пусса ларакак,
Алăк панӳе ларакан—
Хут сайарса ларакан,

Пултăр, пултăр, пултăрăн
Шуйтан хупах айĕнӳе
Тирпейлĕхĕн тăшмансем
Рестантсăсен çуртĕнӳе.

Кăвак лаша манăн çук,
Çиме парас хуйхи çук.
Ман алăра кассă çук,
Салатса йарас хуйхи çук,

МАМИ.

Пĕӳĕк аӳа.

Аӳа Атте, кĕпеллĕх илсе пар.

Ашшĕ. Халĕ тирпейлĕх рашимĕ. Кĕпелĕх илместĕп. Укçасем перекет кассинӳе выртаççĕ.

Аӳа. Мĕнлескер вăл рашим. Ватăскер-и? Еп ăна хĕнетĕп. Ес мана хĕненĕ пекех хĕнетĕп.

Халӳхи халăх сăнанисем

Кассăра кăшт та пулин укçа тымасан, лайăх мар пуласса, теççĕ.

———

Хуран çумĕнӳе хăрăм çунсан, ревиçи пуласса.

———

Ӳăх кутĕнӳен улăм çакăнсан, штатсене ӳакараççĕ.

———

Усламçă тĕнӳе пĕгет тесен, тавар хаклаваӳ.

———

Атăл шывĕ нумай пулнă çул, халăх пурлăхне тирпейлĕ тытман пирки тĕрмесене ленкекенсем нумай пулаççĕ.

———

Хĕр ӳурай йака шăлмасан, пулас йулташĕ шулĕк пулаӳ.

Халăха вĕрентес ĕçре.

Урнă упа.

Хăш çын ăсран тайăлсан пĕртте калаçми пулаŗ, калаççан та майлă калаçмасĕ, аташса калаçаŗ, пуринĵен ытла вĕçĕмрен шухăшлаŗ вара вăл. Хăшĕ пĕри тата урăхла ухмахланаççĕ, ахăрашаççĕ, тĕпĕртетеççĕ, нимĕнсĕрех курнă çынпа хирĕçеççĕ, кашнипех çапăçма та хатĕр. Вĕсене „урса кайнă“ теççĕ вара. Ун пекки сем хутра ситре пулкалаççĕ вара:

«Пирĕн йалта (Сăкăт, Патĕрйел вул. çак уйăсах) халăха çутта кăларас ĕç малалла пыраŗ, крупноксем аван ĕçлеççĕ, çтена хаçаĵĕ тухаŗ—тет йалкор.—Анĵах епĕр çтена хаçаĵĕ кăларни Упа Саĵукĕнне кăмăлне каймарĕ. Вăл майăн 9-мĕшĕнĵе ликпунта çĕмĕрсе кĕнĕ те, çакăнса тăракан лосункăсене тустарма пуçларĕ. Ним тума аптăраса ликвитатгăр кабинетне çĕмĕрсе кĕме тытăнĵĕ, анĵах çĕмĕреймерĕ те, çиллине шăнараймасăр, ахăрашса килне тухса кайрĕ».

Ун пекки сем хутра ситре пулкалаççех терĕмĕр малта, пулаççĕ çав. Упа Саĵукĕ мĕн ен кайа. Упа тесех ахалех каламан пулĕ çав ăна.

Пăхăр пуçлă çын.

Виçи-касси (Ĵупай вул.) шкулĕн саветуйушĵийĕ Антрейĕв, аĵасене вĕрентессинĵен пуçне, халăх хушшинĵе пĕртте ĕçлемест. Пĕрре халăх шкула пухăнĵĕ те, саветуйушĵи арăмĕ халăха шкултан хăваласа кăларас тесе кăмака йушкине вутти çунса пĕтиĵенех шатлаттарса хупса хунă. Вара çынсем пĕтĕмпе аптăраса ĵихна ĵихна тухса тарнă. Хăшĕ-пĕри кайран сĕрĕм лексе пуç ыратнипе аптăранă, тесе çыраŗ Вăрттăн вуç.

Хăйне сĕрĕм тивни çинĵен çырмаççĕ пĕри те. Ун пек пуçа сĕрĕм тимест те пуĵ çав.

Çапăнма йуратакан çын.

Шеммер шкулĕнĵе (Шупашкар у.) хĕлле шартлама сивĕсенĵе те вутă çук тесе, хăш кун саççимех хутмасĕç, хутсан та пит сахал хутаĵĵĕç. Аĵасем вĕреннĕ ĵухне тумтирне те ĕнтĕркесе лараĵĵĕç. Çав вăхăтрах уĵитлĕсем пĕрне пĕр кун, тепĕрне тепĕр кун йатарлатса мунĵа хутса кĕреĵĵĕç.

Вĕсем мунĵа кĕме йуратаççĕ пулсан „Капкăн“ вĕсене хăй мунĵине кĕртес терĕ.

«Шăпĵăк»

Шăпĵăк пит ăста йурлаŗ вăл, ун йуррине пит хавас иглеççĕ вара. Анĵах шăпĵăк, вĕçен кайăк пулсан та, хăçан ĕçлемеллине, хăçан йурламаллине пĕлет. Нăрвашри (Тăвай вул.) вуламалли çурт пуçлăхĕ Сайтсăв ăна кăна пĕрте пĕлмест. Йурлама йуратаŗ.

«Вуламалли çуртра ĵас-ĵасах каçпала йурă сасси илтĕнет. Çур çĕрĵĕн йурлаŗ те вара, çынсем выртса пĕтсен тайкаланкаласа килнелле утаŗ» тесе çыраŗ пĕри.

Вĕçен кайăкран тепĕр уйрăмĕ пур иккен. Шăпĵăк ĕçмесĕрех йурласа савăнаŗ, Сайтсăв «тайкалантарканнине» ĕçсен тин йурлаŗ. Çавăнпа ăна урăх йат памалла пулаŗ. Мĕнле йат памалине пурте пĕлеççĕ пуĵ, каламасан та?

„Капкăн“ пыман йал.

Ваçлей кассинĵен (Кĕçкей вул. Шуп. у.) пире çыраççĕ:

Пирĕн йал пит тĕттĕм. Йалта ни шкул çук, ни вуламалли çурт çук, пĕр орканисатси те çук, ку таранĵĕн пĕр лекси те, пĕр токлат никам вуласа паман. Парттире ĕе комсомолта тăракан пĕр çын çук. Çынсем пуп сăмахне пит итлеççĕ, кĕлле сӳремо йуратаççĕ: Ситменнине тата хурал пӳрĵĕ те çĕрсе ишĕлсех аннă, тет.

Сăмахран каласан, нимĕн те çук иккен. Ку йапала „Капкăн“ пыманнипе пулнă пулас. „Капкăн“ халĕ вăл йала уĵĵота илĵĕ, малашне ĕç çĕкленсе кайасси паллах.

Шпалер мурĕ.

Нурăсри (Иет. у.) вуламалли çуртра стурăш лампăна кĕленĵи тасатма тытăнсан, çтена çине çаппăн шпалера çурса илет те, çавăнпа тасатаŗ. Малашне те вăл çапла хăтлансан!... Мĕн пуласси паллах ĕнтĕ, шпалера пĕтĕмпех пĕтерет. Вăл пĕтсен хаçатсем çурма тытăнĕ. Пит те «тирпейлĕ» иккен стурăшăр. Хаçатсем вулаŗ пулмалла. Анĵах халĵĕн «Капкăн» вуласа курман пулас, ку номĕре вулаĕех ĕнтĕ, ăна пĕлсех тăратпăр.

ПĔҪĔК КУЛĂШСЕМ.

Потвотă.

Сутйе: Есĕ отвот сайавит тумастăн и?

Айăпланакан: Ах!.. ара йепле потвотăсăр? кăçал ҫупрăм-ҫупрăм та... кирлех ĕнтĕ.

Çĕнĕ хыпар.

— Пирĕн йалта кооператтив уçнă?
— Лайăх йапала. Хăçан уçнă.
— Кĕçĕр çăра çĕмĕрсе уçнă.

Пурнăçри арифметтиккă.

Плӳс. Арăм нумай хулăм илсе пырсан, „плӳс“ пулҫĕ теме йурат.

Минус. Аҫа тăрантармаллăх укҫа тӳлемелле пулсан, „минус“ пулат.

Умношени. Кил-йыш хутшăнсан, умношени пулат.

Телени. Çĕр котекси тăрăх пурлăх уйăрнă ҫухне, телени пĕлес пулат.

Телимое. Упăшкапа 20 мĕш ҫисла.

Телитĕл. Арăм.

Расност. Тӳлеймесĕр йулнă парăмсем.

„Капкăнсăр“ аҫа.

Ашшĕ. Ма макăраn, аҫам?

Аҫийĕ. «Капкăн» илсе памастăн та... Атте йулташ, тӳрех калатăп. «Капкăн» илсе памасан кунĕнçĕрĕн макăрăп, сывăрма та пĕлмĕп.

Пуҫа килнĕ шухăшсем.

Мĕн тума кирлĕ марринне айван пуслăхран та вĕренме пулат.

— —

Оҫкосене шутлакаван шут ҫинҫи шăрҫи катăлсах пырат.

— —

Иурататăп текен майра ăсне тĕрмере ларнă ҫухне ҫеҫ пĕлме пултаратăп.

— —

Капкăн куҫĕ хулари уҫрештенисем ваҫҫи ҫурт-йĕр тăвакан технĕксенҫен хăшне-пĕрне куҫăхтарма та пултарат.

— —

Вăйлă сынăн вăйĕ тусĕсенҫен килет.

— —

Капкăн çăварĕ, хупсан, хупăнат, халăх çăварĕ хупсан та хупăнмасть.

— —

Иурăхсăр пуслăх туйанма çăмăл, хăтăлма (унтан) пит йăвăр.

— —

Çын çӳлелле хăпарса пынă çемĕн унăн кăлтăкĕсем курăнми пулсa пыраççĕ.

— —

Хăш ҫухне растратҫăх та тирлейлĕ пулма пултарат.

— —

Уҫрештени пулсан, ĕçĕ тупăнĕ.

— —

Çын ăшҫиккинҫи саплăксем тумтир ҫивҫинҫен нумайрах.

Йăвăр ĕçех мар.

Сутйа. Вăт, Анна Петровна, сана, аҫава çуратсан вĕлернĕшĕн уколовнăй статйапа 3 çула хупмалла турăмăр.

Анна Петровна. Çав пĕҫĕк аҫашăнах çав терийех ан асапланарăр-ха. Ытах пĕҫĕк аҫана йурататтăр пулсан, урăх туса парăп. 3 çулта 3 аҫа. Кун пек мар, тата хитререхкисене тăвăп. Иури, сутйа?

УТИК.

Хăравçă çын.

— Хысна укҫине салатакана суг тунă ҫухне, сан пуҫна мĕнле шухăшсем пырса кĕреççĕ.

— Кăшкăрас килет.

— „Такçанах çапла кирлĕ!“ тесе-и?

— Çук. „Кăравул“ тесе.

Сурăхсем.

Шăши шăтăкĕвҫен хĕвел ăшшине тухнă.
Ăна кĕтӳри хура сурăх курах кайнă
— Ей, аҫасем! Шăши, шăши!
Тет хура сура сурăх.
— Хӳри çине пус, ан кăшкăр урăх,
Тесе ҫупаççĕ ун патне илтнисем.
Хура сурăх шăшийе ĕçерсе йамарĕ...
Ака кĕтӳ пăлхана пуçларĕ.
Мĕн пулнă та мĕн пулнă тесе, ыттисем
Хура сурăх патне ҫупаççĕ,
Ăна хупăрласа илҫĕç.
Тĕрткеленеççĕ, пĕр-пĕрне ҫыпаççĕ.
— Ан тĕртĕр пит, шăшийе тартаттăр!
Тесе тилмĕрет хура сурăх.
— Пуçах касаканни-им вăл? терĕ пĕри
— Вара, çакă ĕнтĕ пире хăмăл çитерекенни,
Терĕ ăна хирĕç пĕр ватă сурăх.
— Апла пулсан хĕне ăна! теççĕ сурăхсем
Анҫах, хĕнеме хăйу çитеймест хăйсен:
Пĕри те—есĕ хĕне, тет;
Тепри те—есе хĕне, тет,
Пуçлаканни пĕри çук.
Çав хушăрах катапа тилĕ пыраҫҫĕ.
Вăл сурăхсене курҫĕ те
Вăсен патне пыҫĕ
(Хир кайăкĕ хир кайăк хутне кĕрес терĕ куран)
— Тăхлаҫăсем! тет тилĕ
— Хуҫ мĕнле ĕçе те пĕлсе тусан аван,
Çак, есĕр тытнă шăши питĕ хайăр йапала,
Унăн шăлĕсем те питĕ çивĕҫ пулмалла,
Ăна ан çапса пăрахăр,
Авă, улăмпа çеç пусарăр!
Сурăхсен телейне, çывăхрах улăм купи пулҫĕ,
Ăна ҫи пирвай мăкла така курҫĕ;
— Ей, аҫсем, ав улăм, йăтăр терĕ вăл
Лешсем шăши çине улăма тултара пуçларĕç,
Хăшĕ пĕри хăпарса та таптарĕç.
— Ну, çитĕ! вилсе кайĕ тата,
Ҫимĕр ха, уçса пăхар!
Терĕ мăкла така,
Уçса пăхаççĕ—шăши çук,
Шăршласа пăхаççĕ—шăрши пур,
Лешĕ шăтăкне çеç тарнă мур.

Н. ИЕВТОККИМĂВ.

Çӳп-çапăллă хĕвел çаврăнĕш.

— Ну, епĕ пайан, Машша, тырă пулă вăррисене тĕрлĕрен туйантăм.
— Мĕнле вара?
— Йармăркăра хĕвел çаврăнĕш илтĕм... темĕн те хутăштарса пĕтернĕ. Аран суйлакаласа пĕтертĕм. Тĕрлĕрен вăрă: вир, хуратул, ахаҫ тул, урпа, ыраш, т. ыт. те нумай. Пурне те акрăм, анкартипе. Сайа каймарĕ.
— Епĕ тата вăл хĕвел çаврăнăш пирки намăс курса пĕтрĕм.
— Мĕнле?
— Утатти: çемҫĕк парха, терĕ. Пĕр ывăç патăм та, катма тăрсан пĕрех сапса йаҫĕ: ес ма кулан, çӳпĕ-çапăлă çемҫĕк паран, тет. Çилленвипе манран уйăрăлҫĕ карĕ. Ан кай тесен те итлемерĕ. Çав çӳп-çапăллă çемҫĕкшĕнех савнипе уйăрлмалла пулҫĕ, мур!...

УТИК.

САТАҪĂ.



Çакăнта катартна пӳрте тунă патаксенҫен пĕр халап тумалла. Çав халапа майлаштарса тăвахансенҫен 5-ĕшне 3-шер кĕнеке паратпăр.

КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

— Пĕлекен (Ҫураҫăк вул.) Кам-кам авланнăн çинҫен „Капкăнра» çырса пымастпăр, мĕншĕн тесен «Капкăн» шурнал САКС кĕнеки мар.

— Курăкана. Ăçтисем ес, аçу-аннӳ мĕн йатлă?—Çавсене катартмасăр сан çыруна вуласа тухма хăйаймарăмăр.

— Хурăнташа. «Пирĕн йалсем кашни кунах çĕр сутса ерех ĕçеççĕ» тетĕн ес. Кашни кун сутса ĕçмелĕх çĕрĕ ăçта сирĕн?

— Талпиçене. Санăн 2 аршăн та 3 вершуклă саметку кĕрейиерĕ. Тирпейлĕх решимĕ пултăр тесе, ун пек пысăк саметкăсем йарса хут сайа йамастпăр. Малалла саметкусене 1 шит тăршĕ анҫах çырма тăрăш.

Пĕр кооператтив историйĕ.

1) Кооператтив уçăлни.

2) Ĕ ç л е ç ç ĕ.

(Çавсемех).

3) Кооператтив пухăвĕ.

(Вăрăсене тытнă хыççăн).

4) Преçитиума сут таврашсем ленкеççĕ.

5) Сӳтсе-йăвни.

(Тĕрмене илсе кайнă суд çинче).

6) Р е с о л ь у т с и.

Ответ. редактор А. Золотов.

Чăвашлит № 712. Чебоксары, Тип. „Чуваш. Книга".